

# Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова



## Кая юлнă юрату

КАЛАВ 12+

Игнат хăйĕн арăмне юратмарĕ. Унра йăлтах тарăхтарчĕ ăна: вăл ватăлма пĕлменни те, хăйĕнчен çамрăкрах курăнни те, тасалăха ытлашши юратни те. Ячĕ те ăна килĕшмерĕ – Любовь. Анчах мĕнле юрату-ха ку, енчен вăл ун çине туйăмсемсĕрех авланнă пулсан?

Игната çартан юратнă хĕрĕ кĕтсе илеймерĕ, урăххине качча тухрĕ. Вăл тарăхнипе хăйĕнпе пĕр класра вĕреннĕ кӳршине мăшăр пулма ыйтрĕ. Тĕлĕнмелле те, вăл темшĕн тӳрех килĕшрĕ.

Лайăх пурăнчĕç, ачасем çуралчĕç, хулара хваттер туянса унта куçрĕç, ялти пӳртне дача вырăнне усă курчĕç. «Кун пек урăх тăсăлма пултараймасть, – шутларĕ Игнат. – Уйрăлмалла. Хăть пурнăçăн юлашки çулĕсене хама кирлĕ пек пурăнса ирттерес, хĕрарăмран аякра, 30 çул пĕрле пурăннăскерпе, нихăçан юратманскерпе...»

Игнат хăйĕн кивĕ йывăç çурчĕ умĕнчи крыльца çине ларчĕ, чей сыпрĕ. Таврара сиренĕн тутлă шăрши сарăлнă. Йывăçсем çулçăра ĕнтĕ. Чиепе панулми сачĕ çав тери илемлĕн курăнать. Çакăн пек пурнăç пирки мĕн чухлĕ ĕмĕтленнĕ вăл: лăпкăлăх, телей, канлĕх пирки. Ялти пурнăç çав тери килĕшет ăна. Ирпе вăранатăн та пулла çул тытатăн. Тин сунă ĕне сĕчĕ тата?! Ăна вăл кӳршĕ хĕрарăмĕнчен туянать. Çавăн пекех ăна крыльца çинче чей ĕçме питĕ килĕшет. Кунта чей те хуларинчен урăхларах, тутлăрах.

Игнат хăйĕн ĕмĕчĕсен авăрне путса йăл кулчĕ – мĕн тери лайăх пурнăç пуçланать унăн. Ав, калитке патĕнче темиçе тĕм роза лартĕ, чӳрече айĕнче – ромашкăсемпе лилисем, карта çумне вара – астрăпа хризантемăсем. Кайран пӳртре çӳреме те кăмăллă пулĕ – кашни пӳлĕме чечек букечĕсем илемлетĕç.

– Каллех чей ĕçетĕн-и?

Игнат калитке патĕнче Мишăна асăрхарĕ. Ялта ăна юратсах каймаççĕ, Игнат та унран пăрăнма тăрăшать. Анчах халь мĕн тумалла – килнех килнĕ-çке.

– Чей ĕçетĕн-и?

– Хăв ĕç. Эп сан пата кирлĕ информаципе.

– Кала, килтĕн пулсан.

– Э, çук, малтан тӳле.

– Мĕн ячĕпе?

– Сана лайăх кăна пулĕ. Ну, кирлĕ мар-тăк, кирлĕ мар.

– Тăхта, миçе тенкĕ кирлĕ сана?

– Виççĕр.

– Ак, 500 тыт. Хăвăрт кала тата чи кирлине.

– Таньăна астăватăн-и? Ну, сан ун патне туйăмсем те пурччĕ.

– Ну, вара?

– Вăл упăшки вилнĕ хыççăн яла килнĕ теççĕ.

– Вара мĕн, мана мĕн ĕç?

– Мĕнле мĕн ĕç? Эс уйрăлнă, вăл мăшăрсăр... Эй, санпа, лайăх пултăр тенĕччĕ. Кайрăм, ман ĕç нумай.

Игнат Мишăн мĕнле плансем пулнине ăнланчĕ, кăшт сыпмалла тата сӳпĕлтетмелле. Мĕншĕн каларĕ вăл Татьяна пирки, миçе çул иртнĕ вĕт-ха... Мĕнле-ши вăл халь? Ахăртнех, çавăн пекех хитре. Тен, ун патне кайса килмелле? А, мĕн? Лайăх шухăш! Сирень тататăп, торт туянатăп! Пĕрремĕш юратăвĕ пирки шутлани ун кăмăлне çĕклерĕ. Вăл ăна пурнăçлама васкарĕ. Чечек татрĕ, хыççăн лавккана кĕрсе тухрĕ, унтан çамрăк чухнехи пекех карта урлă каçса пахча урлă Татьянăн çурчĕ патне васкарĕ.

Уçă чӳречерен телевизор сасси илтĕнчĕ. Тюль витĕр вăл такампа телефонпа калаçакан хĕрарăма асăрхарĕ. Сассипе ку Таня пулнине ăнкарчĕ. Унăн Тани. Мăшăрĕпе пурăннă чухне те ун çинчен шутлатчĕ-çке. Анчах та Таня çапла улшăнасса ĕненмерĕ вăл. Ăçта кайса кĕнĕ-ха унăн яштака кĕлетки? Вăл мăшăрне аса илчĕ – Любăн кĕлетки çаплипех йăрăсчĕ. Игнат кăшт тăчĕ те кайма шут тытрĕ, сиреньпе торта сурт çумĕнчи сак çинчех хăварчĕ.

Çак каçхине Игнат ниепле те çывăрса каяймарĕ. Вăл паян пулнине пуçра темиçе хут çаврăнчĕ. Пурнăç интереслĕ вĕт-ха. Мĕн чухлĕ шутламан пуль вăл Таня упăшкинчен уйрăлтăр, вара вăл пĕр тăхтаса тăмасăр авланĕччĕ тесе. Халĕ иккĕшĕ те ирĕклĕ чухне çапла пачах та тăвас килмерĕ. Çитменнине, ун арăмĕ Таньăран пин хут хитререх. Мĕнле-ши вăл халь? Кулянать пулĕ... Анчах ăна мĕн ĕç – вăл тинех хăйне кирлĕ пек пурăнма пуçларĕ. Арăмĕ пĕрмай мĕнле пурăнмаллине, фастфудсен сиенĕ пирки калание, мĕнле тăхăнсан лайăх пулнине ăнлантарнине илтес çук. Малашлăхра вăл пулла çӳрĕ, ухутана тухĕ, чăхсем, сысна тытĕ... Çак шухăшсемпе арçын тинех çывăрса кайрĕ.

Чăн та, вăхăт иртрĕ. Игнат хуçалăха аталантарчĕ, пĕве чаврĕ, унта карасьсем ячĕ. Пусĕнчен ун иртни пирки шухăшĕсем те тухса кайрĕç. Анчах та ăна ачисем пачах та шăнкăравламанни пăшăрхантарчĕ, ахăртнех, амăшĕпе уйрăлнăшăн çиленнĕ. Люба вара ку хыпара лăпкăнах йышăнчĕ, сценăсем туса кăтартмарĕ. Калаçнă хыççăн ун чĕматанне пуçтарса пачĕ, пĕтĕм япалине якатса типтерлĕ чикрĕ, яла килсе пӳртçурта та тасатса пачĕ.

Çапла çултапăк та иртрĕ. Ак, каллех, май çитрĕ. Маларах кунта вĕсем пуçтарăнса шашлăк пĕçеретчĕç. Халĕ, ав, Игнат пĕчченех. Мĕн тăвас килет, çавна ту. Çумра пĕрмай вĕрентекен хĕрарăм та çук. Пĕрре те шăнкăравламанни те мĕнле лайăх вĕт. Вăл Люба ăна çапла çăмăллăн ярасса шутламаннччĕ. Мăшăрĕ вара яланах уйрăласса кĕтнĕ пек хăй çинчен пĕрре те аса илтермерĕ. Мĕнле пурăннă унпа вăл çавăн чухлĕ çул? Ачасемшĕн. Халĕ вара мĕн? Ачисене те, арăмне те кирлĕ мар. Хăй те, лешсем те шăнкăравламаççĕ.

Карта леш енчен шурă автомобиль курăнчĕ. Кăшт вăхăтран картишне аслă ывăлĕ Володя кĕрсе тăчĕ.

– А, аса илмелли те çук. Тем пулнă-и?

– Салам, атте! Мĕншĕн апла шутлатăн?

– Тахçанах пулман та. Ирт, хурлăхан çулçипе чей ĕçтерĕп. Чей мар, асамлă нектар!

– Халĕ чей ĕçсе аппаланма вăхăт çук.

– Вăхăчĕ мĕн валли-ши вара, ывăлăм? Эп сире пăхса ӳстернĕ, ура çине тăратнă. Халĕ хама кирлĕ пек пурăнма право пур ман.

– Çапла, тен, тĕрĕс те, атте. Пурăн хăвна пĕлнĕ пек. Каçар, ахалех канăçсăрлантарнăшăн.

– Канăçсăрлантарман. Эп хавас эс килнĕшĕн. Тăхта-ха, аннӳ мĕнле?

– Анне.. Эс кунта савăнса пурăннă чухне вăл вăраххăн сӳнет.

– Мĕнле сӳнет?

– Ун шыçă чирĕ вĕт-ха. Сиплеве каясшăн мар. Нумай та вăхăт иртмĕ, аннесĕрех юлăпăр.

– Мĕн калаçатăн эс? Мĕнле сиплесшĕн мар?

– Çапла. Пире ӳстертĕм, малалла пурăнни усси çук тет. Ăнлантăн-и, вăл саншăн пурăнасшăн мар. Тен, сана итлĕ сиплеве кайма.

Çул тăршшĕпех Игнат вĕсен тĕлпулăвĕ мĕнле иртесси пирки шухăшларĕ. Итлемерĕ-тĕк ăна вăл? Тен, пачах та калаçма килĕшмĕ? Мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ вĕт-ха. Вăл вара вуншар çул пĕрле пурăннă хĕрарăмпа тĕл пулма хăрать.

Игнат пĕрле пурăннă хваттере пăхса çаврăнчĕ. Хăй кайнăранпа кунта пурнăç чарăнса ларнă тейĕн. Нимĕн те ниçтан та куçман. Мăшăрĕ курсан арçын хăраса кайрĕ – илемлĕ хĕрарăмăн кĕлетки начарлансах кайнă.

– Мĕншĕн больницăна каясшăн мар? – тӳрех ыйтрĕ вăл.

– Кая юлнă, эп хамăнне пурăнса ирттернĕ ĕнтĕ.

– Вилме ир-ха. Пĕлетĕн-и, пурнăç тин тытăнать. Атя, эп сана больницăна ăсатăп. Кайран яла. Унта халь çав тери хитре, кĕçех чие пиçет, унтан – слива. Варени пĕçерĕпĕр, компот...

Вăл каланă кашни сăмаххи Любăна чĕртрĕ тейĕн. Шуранка пит çăмарти хĕрелчĕ, куçĕсем çиçме тытăнчĕç. Ун чухнехи, качча тухма ыйтнă чухнехи пек.

– Игнат, мĕн тума кирлĕ ку сана?

– Люба, эп тинех ăнлантăм – ман сана çухатас килмест. Эс маншăн чи çывăх çын.

Сиплев йывăррăн иртрĕ. Лайăххи те, япăххи те пулчĕ. Çак вăхăтра Игнат Любăран уйрăлмарĕ. Юлашки тапхăрта вăл пушшех те япăхланчĕ. Шăпах çак вăхăтра Игнат унпа пĕрлешме шутларĕ. Вĕсене киле килсе çырăнтарчĕç. Пĕрремĕш хут Игнат арăмĕ çине юратса пăхрĕ, уншăн темĕн те парĕччĕ вăл, пурăнтăр кăна.

... Игнат мăшăрĕн вилтăпри умĕнче тăчĕ. Хăйне ниепле те каçарма пултараймарĕ вăл. Мĕн чухлĕ вăхăтра ахаль сая ячĕ вĕт-ха: юратмасăр, ăна телейлĕ тăваймасăр. Люба вара ăна кăна юратнă, уншăн пурăннă. Шел, питĕ кая юлса ăнланчĕ вăл Любăран çывăх та лайăхрах çын çуккине. Вăл хăйĕн телейне хăех татрĕ...

**Марина ТРОФИМОВА**



## Çăмламас тусăм Кузя

КАЛАВ 6+

Эпĕ яланах хамăн çăмламас тусăма ăслах мар тесе шутланă. Кузя ятлă вăл ман. Пĕр вăхăтра пирĕн патра хĕрĕмĕн кушакĕ Кокос та пурăнчĕ. Хăй вăл ют çĕршыва канма кайнăччĕ. Ирĕксĕрех икĕ мăр-мăра танлаштарма май пулчĕ.

Тӳрех курăнать: Кокос – интеллигент. Мăнкăмăллă, хăйнеевĕрлĕ, пулипулми хăйĕн çывăхне ямасть. Ăçта килнĕ унта çывăрмасть, ятарлă коврик çинче кăна. Апатне те тиркет, хаклине, тутлине пар ăна. Шывне те тап-тасине, фильтр витĕр кăларнине çеç ĕçет.

Кузя вара тиркевсĕр. Чечек шăвармалли кăкшăмран шыв лаккама пултарать. Эпĕ унта удобрени янине те пăхмасть. Сĕтел çинчен çăкăр татăккине туртса антарса сĕтĕрсе чупма маçтăр. Кайран хваттерĕпе – тĕпренчĕксем. Тата чи чăрмантаракан вырăнсенче выртма пултарать: урай варринче, ваннăй алăкĕ умĕнче, чӳрече ани çинче, япала типекен сушилка çинче.

Ашкăнать тата мĕнле – пĕррех çатлаттарас килет мăнтăркаскерне. Чӳрече каррисене пĕрмаях туртса антарать. Мĕнпе чăрмантараççĕ-ши ăна вĕсем? Хăйĕн шыв мискине темшĕн ӳпĕнтерсе хурать. Урисемпе мискăра шампăлтатать те айăккисенчен çаклатать. Шывĕ тӳрех урайĕнче – çуса тасатса кăна çитер. Сарлака мискăсем лартса паратăп ĕнтĕ, çавах çаврăрса хурать. Пĕр сăмахпа, ашкăнчăк.

Кокоспа туслашас тесе епле тăрăшрĕ вăл. Выляма «сĕнсе» пăхкаларĕ, анчах лешĕ пĕрех лектерчĕ те Кузя диван çинчен мечĕк пекех персе анчĕ. Тепĕр кушак çиленнетчĕ те пăрахса каятчĕ пуль. Ку пур, хăйне хаклама пĕлмест. Çаплипех туслашма хăтланчĕ. Эрне майлă иртсен пулмалла, иккĕшĕ хваттерте вĕçтерсе чупма пуçларĕç. Çапах Кокос ăна çав-çавах аяккарах тытни сисĕнчĕ, хăй «мăнăраххине» кăтартакаларĕ – Кузя аташма тытăнсанах лектеркелерĕ.

Çапла пурăнтăмăр пĕр кана. Икĕ мăр-мăр яланах пĕрле, анчах ытлашши юнашарах мар. Çывăрма та пĕр вăхăтра выртатчĕç, анчах дистанци тытатчĕç. Кăшт кĕвĕçме те пуçларăм: Кузя мана çĕнĕ тусĕпе улăштарнăн туйăнатчĕ. Унччен Кузя хамран пач та уйрăлмастчĕ, ман çинче ачашланса выртма, ыталанма юрататчĕ. Кокос хăнана килсен вара хăйĕн йăлисене вуçех манчĕ.

Вăхăт иртрĕ, хĕрĕм те отпускран таврăнчĕ. Кокоса та килне илсе кайрĕç. Самаях тунсăхларĕ вара Кузя. Аташма та ӳркенчĕ. Кайран юратнă хуçи пуррине аса илчĕ те лăпланчĕ-ха.

Пуринчен ытла çăмламас тусăм эпĕ чирлесен тĕлĕнтерчĕ. Хытах вĕрилентерĕ пирки тăватă кун вырăн çинчен тăраймарăм ун чухне. Кузя ман çумран пĕр шит те пăрăнмарĕ. Кăкăр çинче çаврăна-çаврăна выртрĕ, çемçе урисемпе майăран ыталарĕ, хăлхаран çепĕççĕн мăрлатрĕ... Хăваласа яма та пăхрăм – ахаль те сывлама йывăрçке, ку тата хăйĕн çичĕ килограмĕпе пусать. Вырăн çинчен те тĕксе антарма хăтлантăм – вăл çавах çаврăнать та каялла хăпарать. Ним те тăваймăн, юнашар хуратăп та ыталаса илетĕп. Çапла выртрăмăр иксĕмĕр. Апат та çимерĕ пулĕ вăл ун чухне. Йывăр ыйхăран вăранса каятăп та – вăл пĕрмаях çумра.

Тен, эпĕ хăйне висĕ çул каялла чирлĕскерне çăлса хăварнине аса илчĕ-ши? Вăл чирпе кĕрешнĕ чухне эпĕ те унпа яланах юнашар пулнăччĕ. Мĕн интереслĕ, пиллĕкмĕш кунне, температура пĕтĕмпех чаксан, Кузя шăп-шăпăрт урăх пӳлĕме çывăрма куçрĕ. Хăрушши хыçала юлчĕ, юратнă хуçи халь унсăрах чире çĕнтерет терĕ пулмалла.

**Ольга АЛЕКСЕЕВА**

## Пакша

Ирпе тăрса, тумланса,
Çӳç-пуçа тирпейлесе
Лартăм эпĕ сăнаса,
Вăрманалла тинкерсе.
Приемник патне пырса
Лартăм эпĕ вырнаçса.
Ирхи кăмăл лайăхран
Пуçлас терĕм юрăран.
Куратăп: шур юр çинчен,
Пĕчĕк тĕмсем хушшинчен
Сикрĕ, тухрĕ пĕр-пĕччен
Пакша эпĕ куриччен.
Пакшана эп палласа:
«Салам», – терĕм савăнса.
Кил-ха эсĕ кунтарах,
Паллашар çывăхрах.
Пĕлтĕр эс çак вăхăтрах
Килтĕн çак çул тăрăхах.
Халь вара сиксе-чупсах
Çывхартăн ман патарах.
Шутласа пăхсан, пакша,
Пуринчен эсĕ пуян.
Шăши тĕслĕ кĕрĕкӳ,
Вăрăм çăмлă сан хӳрӳ.
Аялтан эс сӳлелле
Сикрĕн йывăç çинелле.
Те ытла ывăннăран
Лартăн пĕр турат çине..
Киленсе пăхса ларса
Тĕлĕнтĕм çак пакшаран.
Çĕрелле сиксе анса
Çухалчĕ ман куçăмран.

**Е.ПЕТРОВА**

Вăрнар

Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

**Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Иккĕлле телей

*КАЛАВ* 0+



– Ăçта яланах чупатăн, Бублик? Хуллен те çӳреме пулать-çке, – чĕлпĕртен каллех туртрĕ йытта Дима.

Паян канмалли кун. Ирпе ирех паркра çынсем сахал. Чылайăшĕ çак вăхăтра вырăн ăшĕнче тутлă ыйхăпа киленет ĕнтĕ. Арçын ачан та нумайрах çывăрас килетчĕ. Анчах çăмламас тусĕ ăна 6 сехетрех пырса вăратрĕ, урама каймалли пирки систерчĕ. Ним тума та çук. Тăрса-тăхăнса парка вĕçтерсе килчĕç вĕсем.

Дима тахçанах пĕчĕк йытă çури пирки ĕмĕтленетчĕ. Миçе çуралнă куна вăл ашшĕпе амăшне хăйне çакăн пек парне илсе пама ыйтрĕ. Вунпĕр çул тултарсан çеç: «Ну, ывăлăм, эсĕ халĕ пĕчĕк ача мар, хăвна шанса панă чĕрчуна пăхса-асăрхаса тăма пултаратăн. Çавăнпа та сан валли кĕтнĕ парне», – тесе арçын ачана тĕрлĕ тĕслĕ хăюпа çыхнă коробка тыттарчĕ ашшĕ. Унтан пĕчĕк çăмламас йытă çури сиксе тухсан питĕ хĕпĕртерĕ Дима. Бублик ят хучĕ тусне арçын ача. Кунĕпех уйрăлмасăр вылярĕç вĕсем. Анчах савăнăçĕ нумая тăсăлмарĕ. Йытă çурине пăхма пĕртте çăмăл мар иккен. Вăхăтра тула кăлармалла, çитермелле, тасатмалла. Анчах ашшĕне панă сăмаха тытмаллах.

Акă, унтанпа çулталăк та иртрĕ. Бублик ĕнтĕ самаях пысăкланчĕ. Ав, епле хитре йытă утать çуммăн. Сасартăк вăл малалла талпăнчĕ, чĕлпĕртен вĕçерĕнсе тĕмсем патне ыткăнчĕ.

– Бублик, ман пата! Ăçта васкан? – тем пек хытă чупсан та хуса çитеймерĕ ăна Дима. Йытă сасартăк пĕр тĕм патĕнче чарăнчĕ, хыттăн вĕрчĕ. Арçын ача йĕпенсе пĕтнĕ пĕчĕк чăмăрккана асăрхарĕ:

– Ан тив, юрамасть! – кăшкăрчĕ вăл, йытă кушак çурине тулласран хăраса. Пĕчĕк мăр-мăрĕ тарса пытанма та пĕлмест, мĕскĕн. Арçын ачана курсан ун ури патĕнче ачашланса мăрлатрĕ.

– Эх, мăнтарăн. Шăнса кайнă-çке эсĕ. Хырăму та выçнă пулĕ, – пуçĕнчен ачашласа шеллерĕ кушак çурине Дима.

– Атя, Бублик. Çитет уçăлса, – йытта килĕ еннелле туртрĕ вăл. Аран-аран тухса пĕтрĕç вĕсем паркран. Ытти чухне хаваспах каялла таврăнакан çăмламас тусĕ паян ерипен çеç, унта та кунта чарăнса утрĕ. Çул урлă каçнă чухне Дима пасăрхи кушак çурине асăрхарĕ. Иккен вăл вĕсем хыççăн пырать. Акă мĕншĕн Бублик киле васкамасть.

– Машина айне пулатăн-иç. Мĕн тумалла санпа? Аннене ӳкĕте кĕртме пулĕ-ха, атте вара темле йăлăнсан та сана хăварма ирĕк памĕ, – хĕвне хупрĕ кушак çурине арçын ача.

Чăнах та, ашшĕ пĕчĕк мăр-мăра курсанах çирĕппĕн:

– Халех ăçтан илсе килтĕн, çавăнта кайса яр, – терĕ.

– Атте, тархасшăн, пĕр-икĕ кунлăха хамăр патра хăварар-ха кушака. Пĕрле вĕренекен юлташсемпе класса татăлăп та, ăна парса ярăпăр, – йăлăнчĕ ывăлĕ.

– Ну юрĕ, пĕр-икĕ кун пурăнтăр, унтан ытла мар, – амăшĕ хӳтте кĕрсен çеç парăнчĕ ашшĕ.

Дима кушак çурине çуса тасатрĕ, апат пачĕ. Хăйĕн пӳлĕмĕнче пĕчĕк коробкăра çывăрмалли вырăн сарса хатĕрлерĕ.Уроксене туса пĕтерсен пĕчĕк чăмăркка çухалнине асăрхарĕ арçын ача. Ăна вăл ашшĕпе амăшĕн пӳлĕмĕнче тупрĕ. Мăр-мăр канма ларнă арçын çине хăпарса ачашланчĕ.

– Ак, килнĕ кунта мешетлеме, илсе кай хăвăртрах, – хăй патĕнчен хăваларĕ кушака ашшĕ.

Тантăшĕсем хушшинче пĕчĕк чĕрчуна илес текенсем тупăнмарĕç. Йыш хушăнни пĕр эрне те çитет кĕçех. Ашшĕ кашни кун Димăран кушак пирки ыйтрĕ. Арçын ача канмалли кунсенче Ваня юлташĕ килме шантарнине пĕлтерчĕ.

Кушак çури час-часах ашшĕ патĕнче мăрлатса çӳрерĕ. Тем чухлĕ хăваласан та, ун патнех туртăнчĕ. Пĕрре çапла пĕчĕк мăр-мăр диван çинче тĕлĕрсе ларакан ашшĕ çине хăпарса выртнă. Арçын кушака ятлаçас вырăнне пуçĕнчен ачашланине асăрхасан йăл кулчĕ Дима.

Çак кунсенче кушак çурипе йытă та çирĕп туслашрĕç. Пĕр-пĕрин хыççăн чупса вылярĕç. Эх-х, пĕртте мăр-мăра парса ярас килмест Димăн. Анчах ашшĕн сăмахĕнчен иртеймĕн. Акă, шăматкун кăнтăрла тĕлне Ваня тусĕ те çитрĕ. Чунне хытарса йăтса тухрĕ çăмламас чăмăркkана Дима. Хыçалтанах Бублик те сиксе тухрĕ, хыттăн вĕрме пуçларĕ. Унăн сассине илтсе ашшĕпе амăшĕ те килчĕç. Хăйне тем пек лăпкă тытма тăрăшсан та, Димăн пичĕ тăрăх шăпăртатса куççуль юхса анчĕ.

– Çав тери юратан пулсан, тен, хăвăр патрах хăваратăр, – çурăмĕнчен лăпкарĕ Ваня юлташне. – Эп сана пулăшас тесе кăна килĕшрĕм.

Пурте ашшĕ çине йăлăнса пăхрĕç.

– Юрĕ, юрĕ, юлтăрах. Эп хирĕç мар, – кăмăлне çемçетрĕ ашшĕ.

– Урра!!! – çăмламас тусĕсене ыталарĕ Дима.

**Валентина ИВАНОВА**

# «Кунпа ĕç тухмасть!»

*КАЛАВ* 12+

Каçхине. Ĕçсене пуçтарнă хыççăн телевизор умĕнче ларатăп, юратнă сериалăн çĕнĕ серине пăхатăп. Геройсен «пурнăçне кĕрсе ӳкнĕскер» телефон сассипе шартах сикрĕм. «Органсен» ĕçченĕ мана шырать иккен. Кусене тата эп мĕн тума кирлĕ-ши тесе шутлатăп пĕрре интересленсе, тепре шикленсе.

– Наталья Сергеевна-и? – ыйтать хулăм сасă.

– Аха, – тетĕп.

– Сирĕнпе экономикăри преступленисемпе кĕрешекен пай сотрудникĕ калаçать. Полици майорĕ Александр Сергеевич...

– Пушкин-и? – ыйтатăп савăнăçлăн, ăна пӳлсех.

– Мĕншĕн Пушкин? – кӳренчĕ манпа калаçакан. – Эпĕ – Федотов.

– Паллашма питĕ кăмăллă, Федотов юлташ.

– Тӳрех асăрхаттаратăп: пирĕн калаçу çырăнса пырать. Тата...

– Чăнах та-и? – тĕлĕннĕ пек тăватăп. – Эпĕ те çыратăп-çке пирĕн калаçăва.

– Мĕнле? Мĕншĕн çыратăр? Пулма пултараймасть... – темшĕн сасси хумханчĕ поэтăн тезкин.

– Мĕншĕн пулма пултараймасть тата? – хальхинче эпĕ те кӳренме шутларăм. – Çăмăллăнах пултаратăп: телефон çинчи кнопкăна пусрăм та вăл хăех çырать.

– Э-э-э... Асăрхаттаратăп, – «ĕçлĕрех» калаçма тăрăшрĕ арçын. – Уголовлă статьяпа килĕшӳллĕн эсир пирĕн калаçăва вăрттăнлăхра хăварма тивĕçлĕ. Ăна ытти çынсене пĕлтерме юрамасть.

– Тупа тăватăп! – хĕрӳлленсех шантартăм эпĕ. – Упăшкана та пĕр сăмах та каламастăп. Ну, калăр-ха ĕнтĕ тинех, мĕн пулнă унта? Хăш юрăхсăр ман счет çинчен укçа вăрлама хăтланать? Е кредит илесшĕн-и? Е ман банк карттипе такам тӳлет-и?

– Мĕн карточки? Мĕн счечĕ? – тарăхсах кайрĕ «майор».

– Ну, хальлĕхе пĕлместĕп-ха, эсир каласа парасса кĕтетĕп. Сире пи-и-итĕ тимлĕ итлетĕп.

Тăрук телефонра шăплăх. Темиçе çеккунтан аякран пачах ют сасă илтĕнчĕ.

– Эй, уйрăл-ха ку ухмахран. Ку хĕрарăмпа ĕç тухмасть!

– Пи-пи-пи... – илтĕнчĕ шăнкăрав татăлнă сасă.

**Наталья СТЕПАНОВА**